# Патшалăх пулăшăвĕ – аталану никĕсĕ

**Патшалăх хăйтытăмлăх органĕсем çине хунă тивĕçсем анлă. Администрацин вырăнти мĕнпур проблемăсене пĕлсе тăмалла, вĕсене татса пама тăрăшмалла, урăхла каласан, кунти пурнăç ăнăçлăхĕшĕн пуренлĕ явапллă пулмалла. Кĕçĕн Кипек территори пайĕн ертӳлĕхĕ те хăйĕн ĕçĕн тĕп результатне çынсен ырлăхĕнче курать. Чи кирли – ентешĕсем хăтлăхра тата ăнăçлăхра пурăнччăр, ялсенче ăнлану, пĕр шухăшлăх пултăр. Тĕллеве пурнăçа кĕртме хальхи вăхăтра ытларах çул-йĕрсем уçăлнине палăртмалла. Территорисене аталантарма регионти тата федераллă бюджетсенчен инвестици хывăмĕсене тивĕçме майсем пур. Чăваш ен правительстви йышăннă программăсемпе те, патшалăх шайĕнчисемпе те, наци проекчĕсем тĕрев панипе те. Мĕнле усă кураççĕ патшалăх пулăшăвĕн ку тĕсĕсемпе Кĕçĕн Кипек тăрăхĕнче çакăн пирки паян территори пайĕн пуçлăхĕпе Сергей Калистратович ВОЛКОВПА калаçатпăр.**

***– Сергей Калистратович, регионти тата федераллă программăсене хутшăнни мĕнле çитĕнӳсемпе улшăнусене хывăнчĕ Кĕçĕн Кипек тăрăхĕнчи ялсенче?***

– Çирĕплетсех калама пултаратăп, ку программăсене кĕме пултарни территори пайĕшĕн пĕтĕмĕшле те, кашни çыншăн уйрăммăн та пĕлтерĕшлĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем шăпах та çынсен пурнăç пахалăхне ӳстерес тĕллевлĕ. Çакна шута илсех ĕнтĕ вĕсене май килнĕ таран хастартарах хутшăнма тăрăшатпăр. Халăх та çакна ырласа йышăнать.

Юлашки çулсенче ялсенчи инфраструктурăна аталантарассипе туса ирттернĕ пысăк ĕçсенех тишкерер. Пурне те тенĕ пекех çăмăллăхлă программăсен тата наци проекчĕсен хӳттипе пурнăçланма пултарнă. Хăтлăх тĕлĕшĕнчи улшăнусем куç умĕнчех.

Яллă территорисене комплекслă аталантарас программăпа, акă, Кĕçĕн Кипек салинче 2020 çулта спорт площадки çĕкленчĕ. Халĕ вăл çамрăксем валли кăна мар, пуриншĕн те ӳт-пĕве тĕреклĕхре тытмалли вырăн пулса тăчĕ. Кив Сăрьел, Мулакасси Мăрат тата Кив Шуртан ялĕсенчи спорт тусĕсен те пĕрле пухăнма вырăн пур – ятарлă лапамсенче спорт снарячĕсене вырнаçтарнă. Кунта халăх яланах йышлă. Тĕрлĕрен хусканусем тăваççĕ, ĕç хыççăн канаççĕ, пĕр-пĕринпе тĕл пулса калаçаççĕ... Ку кану вырăнĕсене кашни яла уйăрса панă 100 пин тенкĕпе йĕркелеме май килчĕ.

Астăватпăр ĕнтĕ, хăйнеевĕрлĕ парнене республика Пуçлăхĕ пуçарнипе Чăваш автономийĕ 100 çул тултарнă ятпа тунăччĕ. Палăртмалла, 100 пин тенке мĕнле ĕçсене яма йышăнни – кашни ял çыннисен хăйсен суйлавĕ. Кĕçĕн Кипекре, сăмахран, клуб валли музыка оборудованийĕ туяннă. Тимĕрçкассисем ял сăнне илемлетме – ун пуçламăшĕнче стела вырнаçтарма, çавăнпа пĕрлех кунта çуралса ӳснĕ паллă чăваш писателĕ Мĕтри Кипек çинчен астăвăма ĕмĕрлĕх упраса хăварма – йышăннă. Туçи-çармăссем Школьная тата Комсомольская урамсене çыхăнтаракан кĕпер кирлине пĕлтерчĕç – укçапа ăна тума усă курчĕç. Пăваяльсемпе çĕн-кипексем вара ача-пăчана вăйă площадкисемпе савăнтарчĕç. Куратпăр, патшалăх пулăшăвĕпе ял çыннисен культура, спорт пурнăçне пуянлатма, ачасене интереслентерекен объектсене хута яма май килет.

**– Наци проекчĕсен пулăшăвĕ ялсен аталанăвĕнче мĕнле сисĕнет?**

– Яллă вырăнсенче пурнăç тивĕçлĕ шайра пултăр тесен пуренлĕ хавхалантару кирлĕ. Юлашки çулсенче кунтан халăх хулана «тарасси» чактăр тесе пурнăç условийĕсене лайăхлатма тăрăшни савăнтарать. Наци проекчĕсем те ку ĕçре – тĕп пулăшуçăсем.



С.Волков ветерана саламлать.

Пурнăç шайне палăртакан тĕп енсенчен пĕри – çынсем медицина тивĕçтерĕвĕсене килтен аякка каймасăр, пахалăхлă илме пултарни. Çак ыйтăва татса пама «Сывлăх сыхлавĕ» наци проекчĕ тӳпе хывать. Ун ырă витĕмне хамăр тăрăхра та туйрăмăр. Виçĕмçул территори пайĕнчи тӳрех икĕ ялта – Пăваялĕнче тата Туçи Çармăсра – çĕнĕ фельдшерпа акушер пункчĕсем пациентсене йышăнма пуçларĕç. Лариса Филипповапа Эльвира Павлова фельдшерсем хăтлă, пĕрремĕшле медицина оборудованийĕпе тивĕçтернĕ, информаци системисемпе çыхăнтарнă пӳлĕмсенче савăнса ĕçлеççĕ. Ял çыннисем те кăмăллă: чирлесен сипленме, сĕнӳ-канаш илме, иньекци-вакцинаци ирттерме, тĕрĕслевсене тухма вырăнтах ансат.

Пĕлтĕр вара кив-шуртансемшĕн çакăн пекех ырлăх çитрĕ – кунта та модульлĕ фельдшер пункчĕ çĕкленчĕ. Унсăр пуçне, Кĕçĕн Кипекри ФАП-а тĕплĕн юсаса çĕнетрĕмĕр.







Туçи Çармăсри ФАП.

Пирĕн территори пайĕнче вăрăм ĕмĕрлĕ çынсем те сахал мар. 100 çула çывхаракансем те пур. Вĕсенчен пĕри – вăрçă участникĕ – Харитон Петрович Петров. Вĕсен сывлăхĕ те пĕрмаях асăрхаврах. Çакă «Сывлăх сыхлавĕ» тата «Демографи» наци проекчĕсен витĕмĕ те.

**– Юлашки çулсенче пуçарулă бюджет программи анлă вăй илчĕ. Пĕлетпĕр, ун майĕпе Кĕçĕн Кипекри территори пайĕнче те хăтлăх кĕртессипе пысăк ĕçсем пурнăçланчĕç...**

– Палăртмасăр май çук, ялсенчи инфраструктура çĕнетĕвĕнче, чăн та, хальхи вăхăтра пуçарулă бюджет программин тӳпи пысăк. Унта эпир халăх хăй канашласа сĕннĕ-суйланă проектсемпе хутшăннă. Вăл шăпах та çынсене паянхи кун чи кирлĕ ĕçсене туса ирттерме май парать.

Халăх хăй тӳпине хывса, регион-федераллă бюджетсенчен укçа-тенке тивĕçсе 2020 çулта Тимĕрçкассин, виçĕмçул Туçи Çармăсăн масарĕсенчи картасене улăштарма тата çуртне çĕнĕрен туса лартма вăй çитертĕмĕр. Çавăн пекех виçĕмçул Кив Шуртанти пĕвене тасатса йĕркене кĕртнĕ.

Пуçарулă проектсенчен ытларахăшĕ ытти территори пайĕсенчи пекех – çул-йĕрпе çыхăннисем. Тĕлĕнмелли çук, ку – ялсенчи чи çивĕч ыйту. Халĕ, программа пулăшнипе, унччен пылчăкпа çăрăлнă чылай çула вĕт чул сарса хытă сийпе витнĕ. Машинăпа кĕрсе тухма та, çынсене çӳреме те меллĕ. Юлашки çулсенче юсав ĕçĕсем Кив Шуртанти Новая, Лесная, Тĕп урамсенчи, Пăваялĕнчи Речная, Кооперативная урамсенчи участоксенче иртнĕ.

Çулсене çĕнетес тĕллевпе çул-йĕр фончĕ валли уйăрнă укçа-тенкĕпе те тухăçлă усă куратпăр. Пĕлтĕр ун майĕпе Мулакасси Мăратри тата Тимĕрçкассинчи участоксенче юсав пулнă.

**– Кăçал мĕнле курăмлă ĕçсем пурнăçланаççĕ Кĕçĕн Кипек тăрăхĕнче? Тата малашлăх тĕллев-плансене те уçса парăр-ха, тархасшăн.**

– Пирĕн тĕп задача, каларăмăр ĕнтĕ, территори пайне кĕрекен ялсене хăтлăрах, илемлĕрех тăвасси. Кунта пурăнакансем хăйсене ăнăçлă, ӳсĕмлĕ туйччăр. Çавăнпах кăçал та таврари çул-йĕре йĕркене кĕртессипе, социаллă инфраструктурăна тивĕçлĕ тытса тăрассипе малалла ĕçлетпĕр.

Кăçалхи тĕп ĕçсенчен, акă, Туçи Çармăсра Иван Хрисанович Курбатов ячĕллĕ Астăвăм скверне хăтлăлатассине вĕçленĕ. Ку – пуçарулă бюджет программипе конкурс витĕр ăнăçлă тухнă проект. Çул-йĕр фончĕн укçипе вара Тимĕрçкассинче тата Пăваялĕнче çул пайĕсене çĕнетнĕ.

Малашне те Чăваш ен правительстви уйăракан пулăшупа, çăмăллăхлă программăсене хутшăнса ялсенче ырă улшăнусем татах та пуласса шанатпăр. Пулăшу укçи-тенкине тивĕçме хамăр енчен мĕн килнине пĕтĕмпех тăвăпăр.

**Ирина ЯКОВЛЕВА**
**калаçнă**

## ХАКЛАВ



**Ярослав НИКИФОРОВ: «Морское братство» организацин округри Канашĕн председателĕ, Пăваяль ялĕн хастарĕ:**

– Юлашки вăхăтра аван туятпăр: Чăваш ен правительстви яллă вырăнсене пурăнма илĕртӳллĕ тăвас çул-йĕре тытса пырать. Çĕнĕ социаллă учреждениисем уçăлаççĕ, вĕренӳ учрежденийĕсен сăн-сăпачĕпе «ăшчикки те» тĕплĕ юсавсем хыççăн паянхи куна тивĕçтерет. Çул-йĕр инфраструктури уйрăмах тимлĕхре.

Хамăр Кĕçĕн Кипек тăрăхĕнче те çак ырă улшăнусене куратпăр. Территори пайĕн ертӳлĕхĕ ял çыннисен пурнăçне лайăхлатма, çăмăллатма федераллă проектсен, республика программисен мĕнпур вăй-хăватне усă курнипе питĕ кăмăллă.



Ял хастарĕсен пĕр ушкăнĕ.



Пăваялĕнчи Речная урам.